**Александр Блок**

Çырас килни-и? Кирлĕ пултăр
Вăл Блокшăн кирлĕ пулнă пек.
Блок — хапрăкри болта та куртăр,
вăл — Блок. Хăрамăп Блокшăн эп.

Çук, вăл пĕр япала ятне те
ас илмĕ укçалла сутма.
Вăл — çыртăр вăйĕ çук чухне те, —
вăл — Блок. Çук, хăй вăйне çеç мар —

сутман вăл хăй вăйсăрлăхне те.
Сив пӳлĕм тăрăх çӳресе
хальччен курман ялав тĕсне те
вăл курнă — вилессе пĕлсе.

Чун çӳллĕшне ялан сыхлană
вăл çын сăнарĕ ячĕпе,
пĕччен чухне — пĕччен упранă,
çынсем килсессĕн — çынсемпе.

*Айхи, Г. Александр Блок : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 110.*